**Уйӑп, Мишши.**

# ЫЛТТӐН ЫВЛӐМ

*Тимурпа Чӗкеҫе.*

Шӑппӑн, шӑппӑн килчӗ каҫӗ,
Тӗттӗм ӳкрӗ ҫӗр ҫине.
Ӗнтӗ пурте ҫывӑраҫҫӗ,
Пурте хупнӑ куҫсене.

Хура куҫӑм, пӗчӗк чунӑм,
Ҫывӑр, ҫывӑр, куҫна хуп.
Саншӑн халь пурне те тунӑ,
Канлӗ пултӑр ыйӑху.

Тӗнчене ав, ҫутатасшӑн,
Тулли уйӑх хӑпарать.
Ҫумӑнти аннӳ ачашшӑн
Сан ҫине пӑхса ларать.

Вӑл юрлать хулленӗн юрӑ:
«Ачаш ывлӑм, куҫна хуп.
Саншӑн хатӗр халь мӗнпурӗ,
Канлӗ пултӑр ыйӑху.

Ҫывӑрать хулийӗ, ялӗ,
Аҫу санӑн чикӗре.
Ҫӗршыва сыхлать вӑл халӗ,
Хураллать иксӗмӗре.

Асилсе сунать пуль сывлăх
Хăй юратнă ывăлне.
Çывăр, çывăр, ылттăн ывлăм,
Сывлăх сунăпăр хăйне.

Çитĕнсен çулсем сан уçă
Пур çĕре те пур тĕле.
Мускаврa — тăван çулпуçĕ,
Вăл сунать сана телей.

Ăна эпĕр саламлатпăр,
Вăл пурне ырлăх курет.
Çывăр, çывăр, пĕчĕк паттăр,
Вăйлă пулăн тĕнчере.

Ирĕк пурăнăç хĕвеле
Ăшшăн çутатать пире.
Эпĕр пултăмăр телейлĕ,
Эс ÿсен телейлĕрех.

Атăл евĕр тулăх, анлă
Пурнăç пирĕн çĕршывра.
Ыйăху халь пултăр канлĕ,
Пĕчĕк ывлăм, çывăрах.

Пирĕн пурăнăç ыранĕ
Сан умра вăл уçăлать.
Ĕлĕкрен çынсем шыранă
Сан умра выртан çула.

Ÿсĕн ак, пурне ăнланăн
Ĕçпеле кĕрешÿре.

Халь ним шухăш та çук санăн,
Ăшшăн, канлĕн тĕлĕрех...»

Шăппăн, шăппăн килчĕ каçĕ,
Тĕттĕм ÿкрĕ çĕр çине,
Ĕнтĕ пурте çывăраççĕ,
Эс те хупрăн куçсене.

Çĕмĕрт куçăм, пĕчĕк чунăм,
Ăшшăн, ăшшăн çывăрах.
Саншăн халь пурне те тувă
Ытарма çук çĕршывра.

Лиско хулан,
1940 çул.

Уйăп, Мишши. Телей çăлтăрĕ : сăвăсем / Уйăп Мишши. - Шупашкар : Чăвашгосиздат, 1941. – С. 41-43